# Ĕне ырри çиме кайни

*(Аслă ушкăна çӳрекен ачасемпе irттермелли уяв сценарийĕ)*

***В.С. МАКАРОВА***, *Муркаш районĕнчи Патаккассинчи 14-мĕш номерлĕ «Золушка» ача сачĕн музыка ертӳçи*

**Уяв тĕллевĕ:** ачасене чăваш йăли-йĕркипе тĕплĕнрех паллаштарасси, ваттисен сăмахĕсемпе тата тупмалли юмахсемпе кулленхи пурнăçра усă курма вĕрентесси, аслисене хисеплеме хăнăхтарасси.

**У я в ю х ă м ĕ**

Чăваш çи-пуçĕ çийĕн курткăсем тăхăннă ачасем музыка залне шавлăн килсе кĕреççĕ. Кĕсйисенче – синтепонран тунă «юр чăмаккисем».

П ĕ р р е м ĕ ш а ч а. Атьăр юр чăмакки пемелле выляр!

И к к ĕ м ĕ ш а ч а. Чăнах та, юр кайиччен выляса юлар!

Юр пемелле выляççĕ. Вылянă хыççăн тӳрех «Ача-пăча урамра» юрра юрлаççĕ.

В и ç ç ĕ м ĕ ш а ч а. Тепĕр вăйă выляр!

Т ă в а т т ă м ĕ ш а ч а. Мĕнлине выляр?

П и л ĕ к м ĕ ш а ч а. «Кик чунăмла!»

Çак вăййа вылянă чухне варринче тăраканĕ юлашки хутĕнче ĕне «сунă» пек туса кăтартать.

А л ю ш. Çеруш шăллăм, кала-ха, Ленук мĕн туса кăтартрĕ?

Ç е р у ш. Алюш тусăм, пĕлместĕп çав.

А л ю ш. Кукамай сана ахальтен мар «Пĕлменкке» тесе калать çав. Ĕне «сурĕ» вĕт вăл. Ачасем, пĕлетĕр-и, пирĕн Чамăшра пурăнакан кукамайсен ĕни виçĕм кун пăрушка туса панă, шурăпа хура тĕслĕ вăл. Кукамай ĕне ырри пĕçеретĕп тесеччĕ. Çитменнине, хырăм та выçса кайрĕ.

П ĕ р р е м ĕ ш а ч а. Ĕне ырри мĕн вăл?

И к к ĕ м ĕ ш а ч а. Тутлă-и вăл?

А л ю ш. Виççĕ каличчен пĕрре курнине нимĕн те çитмест теççĕ. Атьăр пурте кукамай патне Чамăша!

В о с п и т а т е л ь. Верук кинемисем каçхине хăна пуçтараççĕ. Чăваш йăлипе ача-пăчана ĕне ыррипе кăнтăрла хăналаççĕ пулĕ. Апла, çитсе килер Чамăш ялне!

А ч а с е м хаваслăн шавласа тухса каяççĕ.

Музыка залĕнче кăмака, апат çимелли сĕтел, диван тата арча лараççĕ.

Верук кинеми мăнукĕпе калаçать.

В е р у к к и н е м и (*арчаран сĕтел витти кăларса*). Ĕне ырри çиме таса сĕтел витти сарам-ха. Çăкăр касса хурам. Машук, çунă кашăксене таса ал шăллипе типĕт, урайне шăлсан та чăрмантармасть.

М а ш у к. Юрать, асанне!

Машук асламăшĕ хушнă ĕçсене пурнăçлать.

В е р у к к и н е м и. Мăнукăм, аппу пек маттур та ăслă пул! Эпĕ ăна ахальтен мар Ăспике тетĕп. Вăт çапла кăштăртатсах кун иртет. Чим, кил хушши алăк сасси илтĕнчĕ. Йытă ниçта кайса кĕрейми вĕрет. Машук, кайса пăх-ха, кам унта?

В о с п и т а т е л ь п е а ч а с е м кĕпĕрленсе килсе кĕреççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Аван-и, Верук кинеми? Курăр-ха, мĕнле нумайăн эпир паян!

В е р у к к и н е м и. Иртĕр, иртĕр маттурсем! Çи-пуçне ак кунта хурăр. (*Кĕтесри диван çине кăтартать.*) Паян ирех тăрса тем тĕрлĕ кукăль-çăмах пĕçерсе кăлартăм, ак часах ĕне ыррине те кăмакаран кăлармалла пулать. Хам вăтă пулсан та ĕне усрама пăрахаймастăп. Машук та пулăшать мана, мăшăрăм Иван та. Ĕне çăлкуç вĕт вăл! Ачасем, халĕ эпĕ сире пĕр тупмалли юмах калатăп. Тупсăмне пĕлейĕр-ши?

А ч а с е м. Пĕлетпĕр! Пĕлетпĕр!

В е р у к к и н е м и. Апла пулсан тимлĕ итлĕр. Пиçмен, хуçман, сĕтел çине хуман, ăна çимен çын та çук. Мĕн-ши ку?

Ачасем пĕри те пĕлеймеççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Эпĕ пĕлтĕм. Калама юрать-и?

В е р у к  к и н е м и. Çу-у-ук! Ачасем халь кăна пĕлетпĕр тесе мухтанчĕç-çке! Вĕсене пулăшма çак япала çинченех тепĕр тупмалли юмах каласан ăнкараççех пуль тетĕп.

В о с п и т а т е л ь. Юрĕ апла. Ачасем, чăваш ятне ан ярăр, тимлĕ итлĕр! Шĕвĕ – шыв мар, шурă – юр мар.

П ĕ р р е м ĕ ш  а ч а. Пĕлтĕм! Пĕлтĕм! Ку – сĕт!

В е р у к  к и н е м и. Маттур! Сĕтрен мĕнле çимĕçсем хатĕрлеме пулать, çавна пĕлетĕр-ши тата?

И к к ĕ м ĕ ш  а ч а. Хăйма.

В е р у к  к и н е м и. Тĕрĕс! Хăйма çинчен те тупмалли юмах пĕлетĕп. Каласа парам-ха: «Шурă тӳшек çинче сарă минтер».

В о с п и т а т е л ь. Авалхи саманара хăйма çинчен çапла та каланă: «Чухăн-чахăн тĕпне ларать, пуян тавраш çиеле тухать». Мĕн ку? Хăйма ку! Ачасем, сĕтрен тата мĕнле çимĕçсем хатĕрлеме пулать? Верук кинемее каласа савăнтарăр-ха!

А ч а с е м. Çу, турăх, тăпăрчă, сыр, чăкăт…

В е р у к  к и н е м и. Маттурсем! Паян ак ĕне ырри çитерсе кăтартăп сире. Чăваш мĕн авалтанах выльăх-чĕрлĕх усранă. Хуçалăхра халĕ те уйрăмах ĕне хисепре. Ăна пăруличчен 1–2 уйăх маларах сума пăрахаççĕ. Ача-пăча вара ĕне пăруласса питĕ кĕтет. Чĕчĕ пăрăвне пĕр уйăх «амăшĕпе» тытаççĕ. Пăрушкинчен юлнă сĕте суса илеççĕ, малтанхи виçĕ кун савăта пухса пыраççĕ, кайран кăмакана лартса ĕне ырри пĕçереççĕ. Пĕчĕк чух эпир выльăх-чĕрлĕх çинчен çапла шӳтлесе юрлаттăмăр.

«Сентре çинчи старикки» чăваш халăх юрри (Н. Казаков илемлетнĕ).

И в а н  м у ч и  кĕрет, аллинче витре.

И в а н  м у ч и. Ха, кур-ха, мĕн чухлĕ шăпăрлан кунта! Сывă-и, ачасем?

А ч а с е м. Сывах-ха, Иван мучи! Сире те сывлăх сунатпăр!

И в а н  м у ч и (*хĕвĕнчен кушак кăларса*). Ваçка, тух, ачасемпе паллаш. Ан хăра, тивмеççĕ вĕсем сана, ак сĕт ярса парам. Ачасем, кушаксем пичĕсене мĕншĕн апатланнă хыççăн çеç çăваççĕ, пĕлетĕр-и?

А ч а с е м. Пӗлместпӗр, Иван мучи!

И в а н   м у ч и. Апла пулсан çавӑн çинчен юмах ярса парам сире. «Çерçипе кушак» ятлӑ вӑл, чӑваш халӑх юмахӗ.

Иван мучи юмах каласа парать, ачасем тимлӗ итлеççӗ.

В е р у к   к и н е м и. Кур-ха, Иван, ачасем сана çӑвар карсах итлесе ларчӗç. Маттурсем мар-и, э?

И в а н   м у ч и. Ачисем, чӑнах та, маттур! Çапла-а-а, халӑхра: «Ватти ӑспа пулӑштӑр, çамрӑк вӑйпа пулӑштӑр», – тесе ахальтен каламаççӗ. Халӗ ӗнтӗ ваттисене асӑнса ӗне ырри çиер. (*3 кашӑк ӗне ырри, 3 кашӑк пӑтӑ çиет, 3 çӑвар çӑхӑ çыртса илет.*)

Ачасем ӗне ыррине тата ытти апат-çимӗçе çиеççӗ, аслисене тав тӑваççӗ.

П ӗ р р е м ӗ ш   а ч а. Ӗни сӗтлӗ пултӑр!

И к к ӗ м ӗ ш   а ч а. Пӑрушӗ лайӑх çитӗнтӗр!

В и ç ç ӗ м ӗ ш   а ч а. Ӗни сӗчӗ çуллӑ пултӑр!

Т ӑ в а т т ӑ м ӗ ш   а ч а. Çитес çул ӗни тата пӑрулатӑр!

П и л ӗ к м ӗ ш   а ч а. Тур пулӑштӑр сире, тавах тутлӑ апатшӑн!

В е р у к   к и н е м и. Ӗне ырринче усӑллӑ витаминсемпе микроэлементсем нуммайййипе пӗрле çӗнӗ клеткӑсем тума питӗ кирлӗ аминойӳçексем пуррине тупса палӑртнӑ.

И в а н   м у ч и. Çапла, çапла! Район хаçатӗнче хам та вуласаччӗ-ха: ӗне ырри пуç мимин клеткисене çӗнетет тет, ир ватӑласран та хӳтӗлет, ӳт-пӗверти сиенлӗ япаласемпе наркӑмӑшсене кӑларать тет…

В е р у к   к и н е м и. Ӗне ыррине хӑть мӗн чухлӗ çисен те сиен тумасть. Çийӗр, маттур чӑваш ачисем пулӑр. Иван, сан ӑçта çав пушӑтран тунӑ ӗлӗкхи теттесем?

И в а н   м у ч и. Эккей, юрать иртнинче мунча хутнӑ чух çунтарса ямарӑм. Ара, çӑпатине тума пӑрахни чылай пулать те… Йӑмӑкӑн урисем ыратнӑран тунӑччӗ юлашки хут. Урана çӑмӑл, тарлаттармасть… Акӑ пушӑтран тунӑ кашкӑр, пукане вырӑнне – çӑпата тунӑ чух усӑ куракан калӑп. Мӑшӑрӑм, пӗр хитререх тутӑр тупса пукане туса майлаштарса пар!

В е р у к   к и н е м и. Хăш хĕрачи сăпка юрри пĕлет, çавна пукане парăп. Атя, Алюш, пуçла юмах яма.

«Кашкăрпа карчăк» юмаха ачасем рольсемпе выляса кăтартаççĕ.

В е р у к   к и н е м и. Эх, ачамсем, ĕлĕк эпир урамра тем тĕрлĕ вăйă выляттăмăр: пытанмалла, лапталла, сас пĕлмелле… Ахаль мар каланă ĕнтĕ: «Çĕр пин халăх асĕнче çĕр пин тĕрлĕ вăйă пур», – тесе.

П ĕ р р е м ĕ ш   а ч а. Апла эпир те сас пĕлмелле выляр, шут вăййине хамах калăп.

«Ут варри – Варуçки» вăйă.

И в а н   м у ч и. Курăр-ха, манăн кунта пушăтран тунă лашасем те пур!

Ша-ша, ла-ша,
Çитсе курар Лантăша.
Лантăш хыççăн Муркаша,
Кайран вара Шăмăрша!

В е р у к   к и н е м и. Ай-ай, Иван, эсĕ сĕлĕ çитерсе самăртнă лаша пекех «кĕçенетĕн» тем.

И в а н   м у ч и. Ара, ачасем савăнччăр тетĕп. «Лаша шырани» юмаха аса илер-ха.

«Лаша шырани» юмаха ачасем рольсемпе выляса кăтартаççĕ.

В е р у к   к и н е м и. Иван, ăçта сан тăмран тунă шăхлич? Ачасем ларса та ывăнчĕç пулĕ, пĕр килнĕ май такмак каласа ташлаттарар!

«Витлешӳ такмакĕсем» (сăвви те, кĕвви те Г. Степановăн).

В о с п и т а т е л ь. Хисеплĕ Верук кинемипе Иван мучи, пире ăшшăн йышăннăшăн тав сире! Чăнах та, ачи-пăчи те, выльăхĕ-чĕрлĕхĕ те ырă-сывă, таса пулччăр! Чипер юлăр, тепре тĕл пуличчен!